# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

21 (7446) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи мартăн (пуш) 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

### Мускавран çĕнтерӳпе таврăнчĕ

## Чылайччен асра юлĕ



Муркашри “Визит” суту-илӳ çурчĕ” чикĕллĕ яваплăхлă обществăн директорĕ Л.В. Николаева Мускав хулинчен ырă хыпар илсе килчĕ. Унпа тĕплĕнрех паллаштарас тесе Лилия Валерьевнана хаçат редакцине хăнана чĕнтĕмĕр.

– Эпĕ республикăра иртнĕ пултаруллă хĕрарăмсен конкурсĕнче “Чи шанчăклă партнер” номинацире мала тухрăм, Раççей шайĕнче иртекен конкурса хутшăнма тивĕçрĕм.

Раççейри хĕрарăм – предпринимательсен ассоциацийĕ йĕркеленĕ “Çулталăкри çамрăк директор” конкурса 42 регион хутшăнчĕ. Конкурс программи пуян та интереслĕ пулчĕ. Кăçалхипе вăл вуннăмĕш хут иртрĕ. Эпир хамăрпа пĕрле Шупашкарти 19-мĕш шкулăн фольклор ушкăнне илсе кайрăмăр.

2007 çул вырăс чĕлхин çулталăкĕ пулнă май, конкурса Пушкин балĕнче йĕркелерĕç. Çавăнпа та вилĕмсĕр поэтăн произведенийĕсене, вăл вăхăтри тĕрлĕ ташăсене çĕнĕрен аса илчĕç. Апла пулсан пултаруллă хĕрарăмсемшĕн виçĕ кунлăх ĕçлĕ çул çӳрев чылайччен асра юлĕ.

Паллах, конкурс çĕнтерӳçĕсĕр пулмасть. Эпир вара пĕрремĕш вырăна тухма пултартăмăр. Кил хуçисене, Мускавсене, виççĕмĕш вырăна хăвартăмăр. Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров валли “Служу Отечеству” орден парса ячĕç. Ку пирĕншĕн пысăк чыс пулчĕ. Ытти регионсен ертӳçисем валли Тав хучĕсем пулчĕç.

Эпĕ Мускав хулинчен Пĕтĕм Раççейри “Çулталăкри çамрăк директор конкурс çĕнтерӳçи” медаль, Раççейри хĕрарăм-предпринимательсен ассоциацийĕн Президенчĕ Татьяна Георгиевна Малютина алă пуснă диплома тата журналсемпе каталогсем илсе килтĕм.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Лилия Валерьевна Пушкин балĕнче.**

### Пултаруллă вĕрентекен

## Ыттисемшĕн ырă тĕслĕх



***Чылай ачашăн вĕрентекен тĕслĕх пулса тăрать, унăн пултарулăхне тĕпе хурса юратнă учитель пек пулма тăрăшать. Акă, Муркаш шкулĕнче вăй хуракан Надежда Валериановна Толстова (сăн ӳкерчĕкре) вĕренекенсемшĕн те, вĕрентекенсемшĕн те ырă тĕслĕх пулса тăрать. “Чи лайăх класс ертӳçи-2006” конкурс çĕнтерӳçи пулса тăчĕ вăл. Çапла вара Чăваш Республикинчи вĕрентӳ фончĕн йышăнăвĕпе Мускав хулинчи вĕренӳ семинарне хутшăнма тивĕç пулчĕ. Шкул ачисем хушшинче туса ирттерекен воспитани ĕçĕн пахалăхĕн пĕлтерĕшне ӳстерессипе çине пысăк тимлĕх уйăрать пултаруллă вĕрентекен. Вăл пĕлӳ парса, пурнăç çулĕ çине тухнисем ăна ырăпа асăнаççĕ, ĕçре ăнăçусем сунаççĕ.***

### Ыр кăмăллăх марафонне хутшăнса

## Ачасене пулăшни – сăваплă ĕç

“Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн” ыр кăмăллăх марафонĕ малалла пырать. Унта хутшăнакансен йышĕ те ӳсет. ЧР Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н. П. Петрова пĕлтернĕ тăрăх, ĕнерхи кун тĕлне ятарлă счет çине пурĕ 38690 тенкĕ укçа пуçтарăннă. Хаçатăн иртнĕ номерĕсенчен пĕринче пĕлтерни çумне тата çаксем укçа куçарнă: “Свобода” хуçалăх 3 пин, Муркаш район администрацийĕ 8040 тенкĕ, “Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ” МП 5 пин, Раççейри Финанс министерствин Федераллă Казначействин пирĕн районти уйрăмĕ 1180, Очăкасси шкулĕ 650, Кашмашпа Панкли шкулĕсем 750-шар, Сосновка шкулĕ 850 тенкĕ укçа куçарнă.

Ачасене япала парса пулăшакансем те татах та пур. “Муркаш районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр” патшалăх учрежденийĕн ертсе пыракан специалисчĕ И. Н. Димитриева, тĕп бухгалтерĕ Е. С. Егорова, ертсе пыракан специалисчĕ Р. Г. Владимирова, Пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин Чăваш Республикинчи уйрăмĕн Муркаш районĕнчи организацийĕн председателĕ А. Д. Михайлова, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ А. Е. Андреева, Муркашра пурăнакан А. А. Данилова, Кашмашра пурăнакан пенсионер, реабилитациленнĕ, тыл ĕçченĕ, ĕç ветеранĕ В.А. Никитина.

Марафон халĕ малалла пырать. Çавăнпа та ырă ĕç тума ĕлкĕрĕр. Марафон вăхăтĕнче çеç мар, кулленхи туйăм пултăр вăл – ыр кăмăллăх.

**Л. ПАВЛОВА.**

### Райадминистрацире

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Район администрацийĕн социаллă аталану пайĕ тата «Моргаушавтотехсервис» предприяти коллективĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн февралĕн 5-мĕшĕнчи 34 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

1. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн:

– **Василиса Константиновна ВАСЬКИНОВАНА**, «Моргаушавтотехсервис» предприятин производство пӳлĕмĕсен уборщицине;

– **Нина Павловна САЗОНОВАНА**, «Моргаушавтотехсервис» предприятин нормировщик-комплектовщикне.

2. Культура ĕçĕнче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн – **Галина Георгиевна ГОЛУБЕВАНА**, Москакассинчи Культура çурчĕн директорне.

### Йыхрав

## Сывлăх кунĕ пулать

Çак шăмат кун, мартăн 17-мĕшĕнче, Муркашри йĕлтĕр базинче спорт уявĕ пулать. Старта хуçалăхсенчи, предприятисемпе организацисенчи, учреждениссенчи, влаç органĕсенчи, шкулсенчи йĕлтĕрçĕсем тухаççĕ. Вĕсем район пуçлăхĕн кубокĕшĕн тата Социализмла Ĕç Геройĕн Е.А. Андреевăн парнисене çĕнсе илессишĕн ăмăртаççĕ.

Ăмăртусене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçать. Спортсменсене ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов, Муркаш ентешлĕхĕн ертӳçи А.И. Федотов, Социализмла Ĕç Геройĕн хĕрĕ Валентина Евтихеевна, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ П.П. Давыдов тата ыттисем саламлаççĕ.

Ăмăртусем 10 сех. 30 мин. пуçланаççĕ. Тĕп судья – М.А. Романов. Пурне те сывлăх кунне чĕнеççĕ. Кунта тутлă апат-çимĕç тутанма та, юрă-кĕвĕ итлеме те май килĕ.

Çак шăмат куна хамăр сывлăха парнелер!

### Конкурс

## «Районти чи лайăх сутуçă»

Потребительсен прависене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна тата суту-илӳ, çынсен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ĕçченĕсен кунне халалласа район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи мартăн 6-мĕшĕнчи 88 № йышăнăвĕпе районта мартăн 28-мĕшĕнче «Районти чи лайăх сутуçă» конкурс ирттерме палăртнă. Конкурса хатĕрленсе ирттерме комисси çирĕплетнĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов ертсе пырать. Конкурса ваккăн тавар сутакан предприятисем, уйрăм предпринимательсем хутшăнаççĕ. Итогсене район администрацийĕн пĕчĕк залĕнче мартăн 28-мĕшĕнче 14 сехетре пĕтĕмлетеççĕ. Конкурс материалĕсене мартăн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр район администрацийĕн экономика пайне тăратмалла.

### Малтисемпе танлашар

## Ĕçне кура – хисепĕ

***Район кунне паллă тунин уявĕнче Хисеп грамотисемпе кăкăр çине çакмалли паллăсене тивĕçнисем***

**1. РФ Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамоти:**

– Юрий Фаинович МАДИКОВ, Ильич яч. хис. хуçалăх водителĕ;

– Анастасия Ивановна АНДРЕЕВА, «Муркашри сĕт-çу завочĕ» уçă акционер обществин тăпăрчă хатĕрлекенĕ.

**2. «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» кăкăр çине çакмалли знак:**

– Маргарита Валерьяновна ИВАНОВА, «Малыш» ача сачĕн заведующийĕ;

– Марина Виссарионовна ДАНИЛОВА, Нискасси шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕ;

– Юрий Алексеевич МАКСИМОВ, Мăн Сĕнтĕр шкулĕн физика учителĕ;

– Георгий Витальевич СМИРНОВ, Шатракасси шкулĕн технологи учителĕ;

– Владислав Иванович ТИХОНОВ, Йӳçкасси шкулĕн истори учителĕ.

**3. РФ Шалти ĕçсен министерствин кăкăр çине çакмалли «Милици отличникĕ» знак:**

– Геннадий Иванович ПОРФИРЬЕВ, милицин аслă сержанчĕ, районти шалти ĕçсен пайĕн милицин патрульпе пост службин взвочĕн милиционер-водителĕ.

**4. ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамоти:**

– Ильич яч. хис. хуçалăх;

– Геннадий Иванович МАЛИНИН, «Ударник» хуçалăх водителĕ;

– Елена Алексеевна КИРИЛЛОВА, «Свобода» хуçалăхăн машинăпа ĕне сăвакан операторĕ;

– Инна Михайловна АРИСАНОВА, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин тĕп бухгалтерĕ.

**5. ЧР Шалти ĕçсен министерствин Хисеп грамоти:**

– Сергей Витальевич ЕГОРОВ, милици капитанĕ, районти шалти ĕçсен пайĕн уголовнăй шырав уйрăмĕн оперуполномоченнăйĕ.

**6. ЧР Культура, национальноççен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министерствин Хисеп грамоти:**

– Валентина Владимировна НИКИТИНА, Шетмĕпуçĕнчи ялти тĕслĕх библиотека библиотекарĕ;

– Ольга Вячеславовна ГРИГОРЬЕВА, ачасен Муркашри искусство шкулĕн преподавателĕ.

**7. ЧР Физкультурăпа спорт тата туризм министерствин Хисеп грамоти:**

– Болеслав Николаевич ВАСИЛЬЕВ, Йӳçкасси шкулĕн физкультура учителĕ;

– Владимир Гурьевич ЛЬВОВ, Муркаш шкулĕн ОБЖ учителĕ.

**8. Патшалăх ветеринари службин Хисеп грамоти:**

– Валерий Нилович ШИДИКОВ, Орининти ветеринари участокĕн заведующийĕ.

**9. ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин Хисеп грамоти:**

– Анатолий Андреевич ИВАНОВ, Чапаев яч. хис. хуçалăх лесникĕ.

**10. Ял хуçалăх предприятийĕсем, ял хуçалăх ĕçченĕсем хушшинче мала тухнă:**

– выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче – «Свобода» хуçалăх;

– хресчен тата фермер хуçалăхĕсем хушшинче – «Воюн» (В.И. Пушкин);

– уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсем хушшинче – Марина Николаевна МЕРЛОВА (Чурикасси ялĕ);

– механизаци отраслĕпе техникăна нумай вăхăтлăха управа лартассипе:

– «Герой» хуçалăх;

– «Оринино» хуçалăх;

– «Свобода» хуçалăх.

**11. 2007 çулта Муркаш районĕн Хисеп кĕнеки çине кĕртнĕ:**

– Спиридон Михайлович МИХАЙЛОВ (ЯНТУШ) (грамотăна С.М. Михайлов ячĕпе хисепленекен Юнкă шкулне тата Александр Матвеевич Яндушкина (мăнукне) панă);

– Михаил Федорович КИСЕЛЕВ;

– Сергей Михайлович ВАНЮКОВ.

**12. Чăвашпотребсоюзăн Хисеп грамоти:**

– Муркаш райповĕ;

– Мăн Сĕнтĕр райповĕ;

– Марина Ивановна НИКИТИНА, Отарккă ялĕнчи магазин заведующийĕ;

– Роза Васильевна КИРПИЧНИКОВА, Тренккăри куллен кирлĕ таварсен магазинĕн заведующийĕ;

– Людмила Никоноровна ВОЛКОВА, Апчарти куллен кирлĕ таварсен магазинĕн заведующийĕ.

### Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă хаклă мăшăра, аннене, асаннене, кукамая, хунямана, тăхлачăна, çывăх тăванăмăра, Муркаш районне кĕрекен Ситукасси ялĕнче пурăнакан **Вевея Кузьминична ЕГОРОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул. Ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр. Мăшăрупа, ачусемпе мăнуксем, çывăх тăванусем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр. Пурнăçу яланах ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Салампа мăшăрĕ, ачисем, кинĕсем, тăхлачисем, мăнукĕсем тата мĕн пур тăванĕсем.**



Юратнă мăшăра, аннене, кукамая, тăхлачăна Юнкă ялĕнче пурăнакан **Васса Михайловна ИШТОНОВАНА** 65 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр.

Санăн ырă кăмăлу кашнин валлиех çитет. Эпир сана юрататпăр. Сана саламласа çирĕп сывлăх, нумай çулсем пурăнма сунатпăр. Яланах савăк кăмăллă пул. Ачусен, мăнукусен ăшши нихçан та ан иксĕлтĕр.

**Саламлакансем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачи.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, мăшăра, юратнă аннене, хунямана, ырă кăмăллă асаннене, Москакасси ял тăрăхне кĕрекен Ахмане ялĕнче пурăнакан **София Ивановна ШАРИКОВАНА** 55 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.

Юратнă çыннăмăр, эсĕ нумай çул хушши малтан Муркаш райпо, халĕ Мăн Сĕнтĕр райпоне кĕрекен Калайкасси лавккинче тăрăшса вăй хуратăн.

Эсĕ пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсĕ ырă кăмăлупа, ĕçченлĕхӳпе, тирпейлĕхӳпе палăрса тăратăн. Сана эпир ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр, çĕр çул пурăнма сĕнетпĕр. Хаклăран та хаклă аннемĕр, эс пурришĕн эпир савăнатпăр, хамăра çав тери телейлĕ туятпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем Каринăпа Диана.**